


# Районăн харсăр çыннисем



Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

## Ĕçе чунтан парăнса

**Чирлемесĕр никам та пурăнмасть. Сыватнăшăн хаçат урлă тав тума килекенсем тухтăрсемпе медсестрасене, çавăн пекех маттур водительсене те ырлăх-сывлăх сунмасăр хăвармаççĕ. Руль умĕнче лараканăн ăсталăхĕнчен те килет-çке-ха врачсене, фельдшерсене пулăшу ыйтса шăнкăрав панă чирлĕ çын патне кая юлмасăр илсе çитересси. Тепĕр чухне этем пурнăçне çăлса хăварма минут та паха. Шурă халатлисемпе танах пархатарлă та яваплă васкавлă пулăшу водителĕн ĕçĕ тесен те йăнăш мар пулĕ. Ахальтен-и вĕсене çул çинче çул параççĕ, irttерсе яраççĕ. Темшĕн-çке вĕсен ытти машинăсемпе ĕçлекенсенчен правуртарах пулмалла пек туйăнать.**



♦ *С.Школьникова, В.Павлов фельдшерсем, Г.Дюкин водитель*

«Кирек мĕнле самантра та çухалса каймалла мар,–теççĕ Тăвайри васкавлă пулăшури водительсем.– Кирлĕ пулсан, хăшпĕр кăткăс лару-тăрура шурă халатлисене пулăшма та пĕлмелле».

Пандеми вăйлă сарăлнă тапхăрта та, хальхи вăхăтра та медицина ĕçченĕсемпе пĕрле вĕсем те инфекципе кĕрешес ĕçре малти ретре. «Чи малтанах пулăшу кирлĕ çынна хăвăртрах сиплев учрежденине илсе çитересси пирки шухăшлатăн, –тет Геннадий Дюкин водитель. –Тепĕр чухне сыхланасси çинчен те шутласа илместĕн. Енчен те çак хăрушă чир диагнозĕ çирĕпленнĕ пулсан Шупашкарти сиплев учрежденине çитерме медиксемпе хăвăртрах çула тухатăн».

«Эсир, Геннадий Геннадьевич, сывлăх сыхлавĕн службинчех ĕçлеме çуралнă. Кирек кампа та лăпкă, сăпайлă калаçатăр, çынсен ыратăвне туйса пулăшма хатĕр, ыттисем те çакна палăртаççĕ»,– тетĕп.

Тăвайра пурăнакан «03» автомашина шоферне Г.Дюкина районта нумайăшĕ паллать, сума сăвать. Ăшшăн йăл кулса сывлăх сунмасăр нихăçан та иртсе каймасть вăл. Темиçе çул каялла тăвайсене Канаш хулинчи васкавлă пулăшу подстанцийĕпе пĕрлештернĕ. Пирĕн район бригадинче 6 фельдшер, 4 водитель, 2 машина. Вĕсенчен пĕринпе ашшĕпе ывăлĕ – Геннадийпе Сергей Дюкинсем ĕçлеççĕ, сменăпа ылмашăнса дежурствăна тухаççĕ. Шăпах ĕçрен пушансан тĕл пулма калаçса татăлнăччĕ коллективри чи пысăк ĕç стажĕллĕ водительпе. Сăлтавĕ те пурччĕ. Çак кунсенче Геннадий Геннадьевич 60 çул тултарчĕ. 42 çул вăл руль умĕнче, вĕсенчен 11 çулне – васкавлă пулăшу машини çинче. Ывăлĕ Сергей 18-мĕш çул вăй хурать кунта водительте. Чи малтанах хисеплĕ юбиляра çирĕп сывлăхпа ĕçре ăнăçу, мĕнпур лайăххине сунтăм.

...Геннадий Тăвай шкулĕнче вĕреннĕ чухнех водитель ĕçне кăмăлланă. Тен, малашлăха çак профессипех çыхăнтарăп,–тесе шухăшланă. Çак ĕмĕт-шухăш çулсем иртнĕ май çирĕпленсе пынă. Ытти предметсемпе аван ĕлкĕрсе пынă-ха вăл, аслă шкула та кĕме пултарнă. Техника енне туртăннипе шкулта «автоĕçе» питех те пысăк интереспа вĕреннĕ. Вăтам шкул хыççăн аттестатпа пĕрле экзамена ăнăçлă тытса водитель правине илнĕ. Унтанпа нумай çул иртнĕ пулин те хăйне техникăпа çыхăхлатнă Виталий Кузьмич Михайлова паян кунччченех ăшшăн аса илет Г.Дюкин. 1960 çултан пуçласа 2000 çулччен Тăвайри вăтам шкулта производство никĕсĕсене вĕрентнĕ вăл. Унăн вĕренекенĕсем хушшинче пултаруллисем, ĕçре малтисем йышлă. Сергей та хăйĕн учителĕ çинчен ăшă сăмахсем çеç каларĕ. «Кулибин тетчĕç шкулта, ачасене темĕн те ăсталаттаратчĕ»,– тет çамрăк водитель. Ку сăмах майăн пулчĕ-ха.

Генăн кĕркунне салтака каймалла. Унччен çур çул пур-ха. СМУна ашшĕ ертсе пыракан строительсен бригадине вырнаçнă каччă. Çар служби Украинăра Львов облаçĕнче иртнĕ. Çар дисциплинине çирĕп пăхăнакан, кĕрнеклĕ те спортпа туслă чăваш каччи пур енĕпе те малтисен ретĕнче пулнă, ăна ыттисемшĕн тĕслĕх вырăнне хунă. Ашшĕпе амăшĕ ывăлĕ ячĕпе килекен тав çырăвĕсене вуласа савăннă. Ку çеç те мар-ха, техникăна лайăх пĕлнине асăрхаса Тăвай каччине полк командирне турттарма шаннă. Ку вара уншăн чăннипех те пысăк чыс пулнă.

Çар хĕсметĕнче те тĕрлĕ техникăна «парăнтарма» тивнĕ ăна.

1980 çулта Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе чыслăн татса Геннадий Тăвай ене таврăннă. Професси ăсталăхне курса, ĕнерхи салтака тӳрех районти тĕп больницăна ĕçе илнĕ. УАЗикпе те чылай хушă ĕçленĕ. «Ĕçе лайăх чухлаканпа инçе çула тухма та шанчăклă, лăпкăччĕ»,– терĕ больницăри аслă медсестра Альбина Ивановна Самарина. Çак сăмахсене нумай тухтăртан, ытти ĕçченсенчен илтнĕ вăл. Çакă та ĕçĕн тивĕçлĕ хаклавĕ, ĕçтешĕсен шанăçĕ ĕнтĕ. Ара, медперсоналăн Шупашкара та час-часах отчетпа, канашлу-семинарсене кайма тивнĕ. Ун чухне компьютер тавращĕ пулман, пĕрпĕр хут ĕçĕпе те техника хăвалamalla пулнă. Унăн машини кирек хăш вăхăтра та рейса тухма хатĕррине хăнăхнă администрацирисем. Наградăсем те нумай унăн. ЧР сывлăх сыхлавĕн Министерствин Тав çырăвне, Тăвай район, тĕп больница администрацийĕсен Хисеп грамотисене парса хавхалантарнă. Автомобиль транспортĕнче ĕçлекенсен кунĕнче те ăсталăхĕшĕн, тăрăшулăхĕшĕн палăртса ăнăçу суннă.

Кунта ĕçленĕ хушăрах Вырăс сали хĕрĕпе Алевтинăпа çемье çăмăртанă. Çавăнтанпах ăнлану, ырлăх, килĕшӳ хуçаланать Дюкинсен килĕнче. Алевтина Геннадьевна больницăра бухгалтерта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. Ачисем ӳссе çитĕннĕ. Лилия хĕрĕ аслă пĕлӳ илсе экономиста вĕренсе тухнă, Канашра хула больницин страховани кассинче тăрăшать. Мăшăрĕпе Владимирпа икĕ ача пăхса ӳстереççĕ. Улми йывăççинчен аякка ӳкмен ав. Сергей çемье çавăрайман-ха. Професине илес пулсан, ашшĕн çулĕпе кайнине çӳлерех асăннăччĕ. Пĕр машинăпа ылмашăнса ĕçленĕрен техникăна яланах пĕрле пăхса тăраççĕ.

42 çул машина рулĕ умĕнче. Çак хушăра миçе пин çухрăм çула хыçа хăварман-ши? Çӳрев йĕркисене пăсни пĕрре те пулман унăн. Маларахри çулсемпе танлаштарсан, медпулăшу автомобилĕсене хальхи йышши оборудованипе пуянлатса пынипе кăмăллă пулнине палăртрĕ. Ĕçе чунтан парăннă Дюкинсене иртнĕ çул пуçламăшĕнче «Соболь» çĕнĕ машина шанса панă.

Акă, кăçалхи ака уйăхĕнче РФ Правительствин Председателĕ Михаил Мишустин васкавлă медпулăшу автомобилĕсене регионсене парасси çинчен алă пуснăччĕ. 7 реаномобиль Чăваш Ене çитнĕ часах. Канашри васкавлă пулăшу подстанцийĕ те тивĕçнĕ ăна. Кунта çул çинче шар курнисене, инфаркт, инсульт пулнă, ытти чирпе аптăракан пациентсене пысăк квалификациллĕ пулăшу кӳме май килет. Ӳпкене искусствăлла майпа вентиляци тăвакан аппарат пур.

Дюкинсем хăйсем суйланă ĕçпе кăмăллă. Миçе çынна пурнăç парнелемен-ши фельдшерсемпе кирлĕ çĕре вăхăтра çитсе? Професси çинчен калаçу хускатнă май, кăçалхи апрелĕн 28-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕнче васкавлă медпулăшу службин ĕçченĕсен ятарлă уяв çуралчĕ.

–Мĕнле йышăнчĕç ăна фельдшерсем, ытти ĕçченсем?

–Чыс-хисеп, ĕçе тивĕçлипе хаклани хавхалантарать, паллах. Шăпах коронавирус инфекцийĕ вăй илнĕ вăхăтпа пĕр килчĕ йышăну. Хамăр районта та чирленисен йышĕ пысăкчĕ. Талăкри шăнкăравсем малтанхинчен чылай нумайччĕ. Канашра шутланса тăнăран, Вăрмар районне те, ытти çĕре те чĕнеççĕ,–тет опытлă водитель. – Нумай çул ĕçленĕрен, районти çулсене те, урамсене те, хăш-пĕр пациентсене лайăх пĕлни те чĕннĕ çĕре вăхăтра çитме пулăшать. Тепĕр чухне пире те чирлисен кăмăл-туйăмĕ çине витĕм кӳме тивет.

Канашри васкавлă пулăшу подстанцийĕн Тăвайри бригадинчи Валерий Анатольевич Павлов фельдшерпа та çав кунах калаçма тӳр килчĕ. Водительсене ырларĕ вăл. Пулăшу машинине çĕнетсе, оборудованипе пуянлатса пынине çирĕплетрĕ. Хăйĕн те ĕç стажĕ пысăк, васкавлă пулăшу паракан тытăмра вăй хума пуçланăранпа 32 çул çитнĕ. Ираида Владимировна Шустимова, Александр Ильич Петров, Анжелика Валентиновна Георгиева, Светлана Ивановна Школьникова, Ольга Николаевна Безрукова фельдшерсем ăста специалистсем пулнине пĕлтерчĕ. Хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен, тепĕр машинăпа улшăнса ĕçлекен Вениамин Геннадьевич Феофановпа Анатолий Никитович Карпов водительсем те пархатарлă ĕçре ырă ят çĕнсе илнĕ.

Унтан Геннадий Геннадьевичпа калаçăва малалла тăсрăмăр. Ытти ĕçсенче те харсăр вăл. Ялти çынсемпе пĕр чĕлхе тупса усăллă ĕçе явăçтарма пултарать. Чун киленĕçĕ çинчен ыйтсан, пытармарĕ:

–Пушă вăхăтра çут çанталăк, тăван тăрăх илемĕпе киленме юрататăп, уçă сывлăшра уçăлса çӳрени сывлăхшăн усăллă. Уйрăмах кăмпана çӳреме кăмăллатăп. Пулăçсем вырăнĕнчех туятăп хама кăмпа татнă вăхăтра. Манăн шухăшпа, кашни çыннăн туйăма çĕклекен "хобби" пулмалла.

Тăрăшуллă, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан çемьен кил хуçалăхĕнче те ĕç-хĕл ăнăçса пырать. Пушă вăхăта ытларах мăшăрĕ çуралнă ялта, Вырăс салинче, вăхăта ирттереççĕ. Яла хăтлăрах, илемлĕрех тăвас тесе йĕркелекен субботниксенчен пĕрре те юлмаççĕ. Пĕлтĕр ялйышпа пĕрле водительте ĕçлекен Вениамин Феофанов ертсе пынипе чăрăшсен аллейине хывнă. Вĕсем лайăх чĕрĕлнĕшĕн савăнать. Ялта çветтуй Амфилохий ячĕллĕ чиркӳ тăвас ĕçре те активлăх кăтартнă вĕсен çемйи. Ĕнер, юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнче, чиркӳре пĕрремĕш служба иртнĕ.

–Пĕчĕк яла пĕтерес марччĕ, халĕ 80 кил хуçалăхран 55-шĕнче пурăнаççĕ,– тет Геннадий Геннадьевич. В.Феофанов староста пуçарăвĕпе тирпей-илем кĕртес ĕçсем пурнăçланаççĕ. Чиркӳ тунă чухне те нимелле нумай ĕçленĕ. Кăçалхи суйлавра та медслужба водительне ял халăхĕ Тăвай ял тăрăхĕн депутачĕ пулма суйларĕ. Мăшăрĕ Эльвира та больницăра ĕçлет. Пур енĕпе те сатур.

Васкавлă медпулăшу тытăмĕнче вăй хуракан фельдшерсем коронавирус инфекцийĕ лекесрен сыхланмалли йĕркесен, хăрушă чире сарăлассине чарма пулăшакан мерăсене туллин пăхăнмаллине те аса илтерчĕç. Чир малтанах аслă ăрурисемпе ватăсене аптăратать. Маска режимне тытса пымалла, ĕçе кĕнĕ чухне температура виçмелле, дистанцие пăхăнмалли çинчен асăрхаттарма ыйтрĕç халăха.

**Р.ШУМОВА.**

### ШУХĂШ

**Л.ПАВЛОВА, пенсионерка, ĕç ветеранĕ, Тăвай ялĕ:**

Маларах, ачасем пĕчĕкрех чухне, Тăвайри васкавлă пулăшу уйрăмне шăнкăравласа темиçе хутчен те пулăшу илнĕ. Халĕ ватă анне Лидия Ивановна патне чĕнсен çийĕнчех çитсе пулăшу парса хăвараççĕ. Чĕрепе, юн пусăмĕ пысăккипе аптăрать салтак арăмĕ. Чăваш Енре ялта медицина пулăшăвĕпе тивĕçтермелли тытăма аталантарасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

Васкавлă пулăшури водительсем чăннипех те пултаруллă. Чирлĕ çын патне вăхăтра çитеççĕ. Темиçе çул каялла тĕттĕм симĕс тĕслĕ «03» тесе çырнă машинăсем вырăнне шурă тĕслисене курма хăнăхрăмăр. Условисем лайăхланса пыни савăнтарать. Машина салонĕнче те ĕлĕкхи пек мар: ăшă, çутă, тĕрлĕ сиплев хатĕрĕ. Фельдшерсем те нумай çул тăрăшаççĕ. Валерий Павлов, Александр Петров, Анжелика Георгиева, Ирина Шустимова тата ытти фельдшерсене, райбольницăри медицина ĕçченĕсене пурне те тав сăмахĕ калас килет. Турă сывлăх патăр сире, ан чирлĕр. Эсир пурне те кирлĕ.